## Ветерансем çук, анчах вĕсем асран тухмаççĕ

Хальхи ăру финн вăрçи çинчен сахал пĕлет, вăл Тăван çĕршывăн аслă вăрçи, унăн нумай çухатăвĕсем, инкек-синкекĕ çинчен вара чылай илтнĕ. Çапах та малтанхи те пирĕн нумай ентешсен пурнăçĕсене илсе кайнă. Çапла, пысăк мар Нариманово ялĕнчен финн вăрçине иккĕн кайнă - Галимзянпа Зайдулла. “Кĕтĕр пире, эпир пурпĕрех таврăнатпăр”, - сăмах панă вĕсем сывпуллашса, анчах та сăмахне тытайман, ĕмĕрлĕхех вăрçă хирĕсенче выртса юлнă. Зайдуллан килĕнче арăмĕпе виçĕ çулхи хĕрĕ юлнă, Галимзянăн вара - арăмĕ тата тăватă уйăхри ывăлĕ Марат, халĕ вăл çитĕнсе çитнĕ арçын ĕнтĕ. Чĕрĕ ашшĕне курма май пулманнипе, тунсăхланипе вăл аллине купăс тытнă. Чуна тивекен кĕвĕсем калама тытăнсан тата ытларах ашшĕне аса илтерет вăл. Пирĕн районти çар комиссариатĕнче финн вăрçине хутшăннисем çинчен сведенисем пуррипе çуккине пĕлесшĕнчĕ эпĕ, мĕнле те пулсан çăмăллăхсем пур-и вĕсен?

**Д.МИНГАЛИМОВА.**

***Çак çырăва эпир районти çар комиссариатне ярса патăмăр. Районти çар комиссарĕн çумĕ И.А.Хафизуллин çапла хуравларĕ: “Правительство постановленийĕпе килĕшӳллĕн финн вăрçине хутшăннисем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннисемпе пĕр тан мĕнпур çăмăллăхсемпе усă курма тивĕçлĕ. Финн вăрçине хутшăннă, учетра тăракан ветерансем хальхи вăхăтра пирĕн районта çук”.***

***Этем пурнăçĕ асра юлнинчен чылай кĕскерех иккен.***

## Чугун çулăн малашлăхĕ шанчăклă

Чугун çул транспорчĕ пек кăткăс отрасльшĕн пĕр çул та çăмăл килмест, пĕлтĕрхи вара уйрăмах йывăр пулчĕ. Пĕр-пĕрин хушшинчи тӳлеве саплаштарманнипе хăш-пĕр клиентсем тиевсене йышăнассинче чăрмавсем пулнă. Çĕршывра политикăпа экономика лару-тăрăвĕ çирĕп пулманни, укçа-тенкĕ çитменни, чугун çул çинче час-часах аварисем пулни...

Çапах та йывăрлăхсене пăхмасăр, Нăрлат чугун çул станцийĕн коллекивĕ, Л.Н.Газизуллина ертсе пыраканскер, икĕ тĕп кăтарту тĕлĕшпе: тиевсене тиессипе тата пушатассипе иртнĕ çул планне ăнăçлă пурнăçланă.

Пассажирсене илсе çӳрессипе те пысăк йывăрлăхсем пулман. Çулталăк вĕçĕнче хальхи требованисемпе килĕшӳллĕн тунă çĕнĕ тавар кантурне хута янă. Пурăнмалли пысăк çурта туса пĕтерне. Котельнăя газпа ăшăтма куçарас тĕлĕшпе те чылай ĕç пурнăçланă.

Тиев составĕсен, пассажир поезчĕсен шутне чакарнине пăхмасăр, чугун çулĕ çинче вăй хуракансене улшăнусем тивменни савăнтарать. Вĕсем, тĕпрен илсен, хăйсен ĕç вырăнĕсенчех юлнă, ир те, каç та, пĕр канмасăр ĕçлеççĕ. Вĕсен шутĕнче - станци дежурнăйĕ В.Грачева, А.Салахутдинова телефонистка, поезд составителĕсем П.Синяков, Ю.Денисов, билет сутакан кассир Н.Петрякова тата ыттисем те.

- Чугун çулĕн малашлăхĕ пур, вăл шанчăклă, - тет Любовь Никифоровна, хăйĕн планĕсемпе паллаштарса. Кăçал пирĕн коллектив 90 хваттерлĕ пурăнмалли çĕнĕ çурт тума пуçласшăн. Чи малтан чугун çул поселокĕнче пурăнакансен интересĕсене кăларса тăрататпăр. 1910 çулта тунă кивĕ вокзал вырăнне çĕннине тăвассине те вăраха тăсмалла мар.

Чугун çул ĕçченĕсем чугун çулне электрификацилессине чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. “Ун чухне эпир тата хастартарах ĕçлĕпĕр”, - теççĕ вĕсем.

Калаçу чугун çул çинчи составсене ӳстерессипирки пырать. Тиевсем, пассажирсем пулсан вара чугун çулĕ те пурăнĕ.

**Р.ГИНЯЕВА.**



## Ăшăпа хăтлăхăн темиçе саманчĕ...

Урамра шартлама сивĕ, анчах та чечек оранжерейине аса илтерекен пӳлĕме кĕрсен, ăшă та хăтлă пулнипе çулталăкăн хăш вăхăчĕ пулни çинчен те манса каятăн. Тĕрĕссипе вара нимĕнле оранжерея та, теплица та мар, ку вăл - ялти аптека. Анчах та кунта ĕçлекен хĕрарăм чечексене питĕ юратать, кашни çинчен вăл уйрăмшарăн кăмăлпах каласа парать.

Кĕскен каласан, ăнлантарса парасси, кăтартасси, сĕнесси - аптека заведующийĕн хăнăхнă ĕçĕ. Кунĕпе миçе чирлĕ çын пулмасть пулĕ кунта. Чăнах та, пациентсенчен чылайăшĕ кунта хатĕр рецептсемпе килеççĕ, вĕсене кирлĕ эмел памалла кăна. Анчах та хăшĕ-пĕри больницăна кĕриччен кунта килеççĕ. Фания Хазиповна чирлĕ çынран тĕплĕн ыйтса пĕлнĕ хыççăн вара мĕнле эмел памаллине палăртать. Унăн пĕлĕвĕ те, опычĕ те çителĕклĕ. Аптекăра вăл вăтăр çула яхăн вăй хурать вĕт. Кĕскен каласан, вăл çак ĕçе пурнăçлама çуралнă теме пулать, 1970 çулта Хусанти фармацевтика училищинчен вĕренсе тухнă хыççăн çамрăк хĕрача çак аптекăра ĕçлеме тытăннă та халиччен те çакăнта “хуçаланать”.



Аптекăри ĕç вара питĕ кирлĕ те яваплă. Çĕнĕ Элметри больницăсăр пуçне, çаплах çывăхри ялсенчи фельдшерпа акушер пункчĕсем сиплемелли препаратсем тата эмелсем илеççĕ. Паллах, çаксемсĕр пуçне, Фания Хазиповнан çынсемпе те пĕр чĕлхе тупма пĕлмелле, вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерме тăрăшмалла. Вăл вара кунта та пултарулăх кăтартать. Ĕç вырăнĕнче те унăн йĕркелĕх хуçаланать. Санбюллетеньсемпе тĕрлĕрен стендсем яланах кăларать, гербари те пур, аптека кашни çул эмел курăкĕсем чылай пуçтарса типĕтет.

Çакăн пек вăл пирĕн Фания Хазиповна Гатина - ăслă та тирпейлĕ ĕçчен, ырă кăмăллă та тăрăшуллă анне, мăшăр. Унăн икĕ ывăл. Асли, Ильшат - Хусанти ветеринари институтĕнчен вĕренсе тухнă, кĕçĕнни, Ильназ - ял хуçалăх академийĕнче экономика факультетĕнче вĕренет. Шăп кăна вĕсем ăна вăй кĕртеççĕ тата ыранхи куна шанăç параççĕ.

**Р.ГИНЯЕВА.**

**Ӳкерчĕкре: Кивĕ Элметри аптека заведующийĕ Ф.Гатина.**

**Н.Азизов сăнӳкерчĕкĕ.**

* Çемье тата общество

## Мĕн акатăн, çавă шăтать

- Таврăнтăн-и, ывăлăм? Аллусене çу та сĕтел хушшине лар...

- Çирĕн-и, хĕрĕм? Тав тума ан ман...

Мĕнле çемьере час-часах илтĕнеççĕ çакăн пек ăшă сăмахсем? Паллах, туслă çемьере. Тĕрĕсрех каласан, çакăн пек калаçусем ыттисемсĕр пуçне, асламăшĕпе, аслашшĕпе пĕрле пурăнакан çемьесенче илтĕнеççĕ. Асламăшĕ яланах çемьене пăхать: хальхи лăпкă мар вăхăтра мăнукĕсене шкула ăсатать, уроксем хыççăн кĕтсе илет. Çав вăхăтрах, никама кансĕрлемесĕр тата йăлăхтармасăр, ачана йĕркеллĕ те ырă кăмăллă пулма вĕрентет. Арçын ачасем вара ытларах аслашшĕ патне туртăнаççĕ. Вăл пĕчĕк çава та ăсталаса парать, мăлатук тытма та, йĕркине те, выльăхсене пăхма та вĕрентет. Пурнăçри пĕр урок та йĕр хăвармасăр иртменни паллă ĕнтĕ.

- Çакăн пек çемьесенче ачасем йĕркеллĕ те кăмăллă ӳссе çитĕнеççĕ, халăх йăлисене пĕлеççĕ, аслисене хисеплеççĕ, - теççĕ пĕр саслăн педагогсем.

Юлашки çулсенче çамрăк çемьесем ашшĕ-амăшĕ çуртĕнчен уйрăлса тухса, хăйсем çеç пурăнма пуçланинче нимĕн лайăххи те курăнмасть. Çамрăксен микрорайонĕсем куç умĕнчех ӳссе ларчĕç.

Çавна май вăхăта кунĕ-кунĕпе аслисемсĕр, хăйсем çеç иртерекен çамрăк ачасем хушшинче преступлени тăвасси ӳсрĕ, нравственность воспитанийĕ те япăхланчĕ. Юлашкинчен вара пирĕн ялсем, атте-анне çурчĕсем пушанса юлчĕç, юхăнса кайрĕç. (Ĕлĕкренех пыракан мусульман канонĕ кĕçĕн ывăл ашшĕ-амăшĕ çуртĕнче юлмалли çинчен пĕлтерсе çакна та шута илнĕ пулĕ). Тăван кил-çурта çухатни тăван çĕрпе çыхăну татнине пĕлтернĕ.

Тăван яла килсен шкул директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ ялта ашшĕ-амăшĕпе пĕрле пурăнакан çамрăк çемьесен шучĕ ӳсни çинчен савăнса пĕлтернĕ хыççăн çакна тепĕр хут ĕнентĕм.

- Туслă пурăнаççĕ, сывлăхлă ачасем ӳсеççĕ. Шкула асламăшĕсем пăхса ӳстернĕ ачасем пырасси савăнтарать. Çапла. Туслă, пĕр-пĕрне ăнланса пурăнаççĕ Мусинсем те: Ринат - механизатор, мăшăрĕ Рамзия - доярка. Çемьере икĕ ача ӳсет. Вĕсенчен инçех мар Минсафинсен пысăк çемйи пурăнать. Моньп пиччепе Райса аппа хăйсем те 40 çул упăшкин амăшĕпе пурăннă, халĕ вара Мунир ывăлĕпе Флюра кинĕ вĕсемпе пĕрле пурăнаççĕ. Асламăшĕпе аслашшĕ вара виçĕ мăнукне пăхма вăй-халне те, вăхăтне те шеллемеççĕ. Касым пиччепе Сафия аппа Мифтаховсем те хăйсен ачисемпе - Ринатпа Альфия кинĕпе питĕ килĕштерсе пурăнаççĕ.

Ильдуспа Рузалия Хуснутдиновсем те ашшĕ-амăшĕпе пурăнма шутларĕç. Пысăк та лайăх чул çурт туса латрĕç, тулăх пурнăçпа пурăнаççĕ. Ăста та вăр-вар Аклима аппа çамрăк кинне пур енчен те пулăшать, çулла вара çак çуртра хăна татăлмасть.

Ибрагимовсен çемйи ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăрать. Аслисем - Ильгиз пиччепе Флюра аппа, çамрăксем - Альберт ывăлĕпе Гульчира кинĕ, шăкăл-шăкăл калаçса, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнаççĕ.

Гиматдиновсен, Шакуровсен çемйисем те туслă пурăнаççĕ. Çамрăксем тăван хуçалăхра вăй хураççĕ, ватăсем вара кил-çурта пăхаççĕ. Çак çемьесенчен шкула лайăх ачасем пырасса, малашне вĕсенчен ĕçе юратакан йĕркеллĕ çынсем пуласса пĕлсех тăраççĕ педагогсем. Халлĕхе вара çемье вучахне сыхласа, ватăсем ачасене пĕрлештереççĕ. Çĕнĕ çуртсенче хисеплĕ вырăна аслашшĕпе асламăшне уйăрса параççĕ пулсан, çакă çамрăк хуçасем хăйсем валли канлĕ те телейлĕ ватлăх туса панине пĕлтерет. Мĕн акатăн, çавă шăтать тесе тĕрĕс калană ваттисем.

**С.ХАЙРУЛЛИНА.**

**Кульбаево-Мараса ялĕ.**

# TV-программа со 2 февраля по 8 февраля

## ПОНЕДЕЛЬНИК

### 2 ФЕВРАЛЯ "ОРТ"

6.00 "Доброе утро". 9.00 12.00 15.00 18.00 0.20 Новости. 9.15 18.20 "РОКОВОЕ НАСЛЕДСТВО". 10.00 Поле чудес. 11.00 Здоровье. 11.30 19.30 Угадай мелодию. 12.15 Программа "Вместе". 13.00 "БРИЛЛИАНТОВАЯ РУКА". 15.20 Мультсериал "Розовая пантера". 15.45 Марафон-15. 16.05 Звездный час. 16.40 Премьера сериала "Новые приключения Робин Гуда". 17.10 ...До 16 и старше. 17.30 Вокруг света. 19.05 Час пик. 20.00 Программа "Мы". 20.45 Спокойной ночи, малыши! 21.00 Время. 21.40 "ОНИ СРАЖАЛИСЬ ЗА РОДИНУ". 0.40 "ГЛАВНЫЙ ПОДОЗРЕВАЕМЫЙ"

### "РОССИЯ"

7.00 Мультфильм. 7.15 Проснись. 7.30 11.00 14.00 17.00 20.00 23.30 Вести. 8.00 23.55 "Дежурная часть". 8.15 Товары-почтой 8.20 "Стронг" представляет. 8.25 "На заметку". 8.30 Деньги. 8.45 Графоман. 8.55 Православный календарь. 9.00 "Аншлаг" и Ко. 10.05 20.45 "Санта-Барбара". 11.30 22.20 "Графиня де Монсоро". 12.35 "Урмасс Отт с Аллой Пугачевой". 14.35 Фильм-комедия "Супружество". 16.30 "Маленький бродяга". 17.30 Кроссворд. ". 20.30 Подробности. 21.50 Довгань-шоу. 0.15 Авто-шоу.

## ВТОРНИК

### 3 ФЕВРАЛЯ "ОРТ"

6.00 "Доброе утро". 9.00 12.00 15.00 18.00 00.05 Новости. 9.15 18.20 "Роковое наследство". 10.00 "Человек в маске". 10.45 Смехопанорама. 11.20 Домашняя библиотека. 11.30 19.30 Угадай мелодию. 12.15 "Вместе". 13.05 "Семнадцать мгновений весны".1-я серия. 14.20 Музыкальная почта". 15.20 Мультсериал 15.55 Счастливый случай. 16.40 Сериал "Новые приключения Робин Гуда". 17.10 ...До 16 и старше. 17.30 Вокруг света. 19.00 Погода. 19.05 Час пик. 19.30 Угадай мелодию 20.00 Тема. 20.45 Спокойной ночи, малыши! 21.00 Время. 21.40 "АННА НА ШЕЕ". 23.25 "Парижские тайны Эльдара Рязанова".

### "РОССИЯ"

7.00 Мультфильм. 7.15 Проснись. 7.30 11.00 14.00 17.00 20.00 23.30 Вести. 8.00 23.55 "Дежурная часть". 8.20 "Мир здоровья". 8.25 "На заметку". 8.30 Деньги. 8.45 Графоман. 8.55 Православный календарь. 9.00 Диалоги о животных. 10.05 20.45 "Санта-Барбара". 11.30 12.24 22.20 "Графиня де Монсоро". 14.35 "Я и мафия". 16.10 Торговый дом "Ле Монти". 16.20 0.10 "Мой Пушкин". 16.30 "Маленький бродяга". 17.30 "Любовь с первого взгляда". 18.05 История одного события. 20.30 Подробности. 21.50 "Собачий мир". 0.15 Горячая десятка.

## СРЕДА

### 4 ФЕВРАЛЯ "ОРТ"

6.00 "Доброе утро". 9.00 12.00 15.00 18.00 0.20 Новости. 9.15 18:20 "Роковое наследство". 10.00 Тема. 10.45 В мире животных. 11.25 Джентльмен-шоу. 12.15 "Вместе". 13.05 "Семнадцать мгновений весны". 2-я серия. 14.25 Армейский магазин. 15.20 Мультсериал. 15.45 Классная компания. 16.10 Зов джунглей. 16.40 "Новые приключения Робин Гуда". 17.10 ...До 16 и старше. 17.30 Вокруг света. 19.05 Час пик. 19.30 "Золотая лихорадка". 20.10 Человек и закон. 20.45 Спокойной ночи, малыши! 21.00 Время. 21.40 "Африканец". 23.40 "Парижские тайны Э.Рязанова".

### "РОССИЯ"

7.00 Мультфильм. 7.15 Проснись. 7.30 11.00 14.00 17.00 20.00 23.30 Вести. 8.00 23.55 "Дежурная часть". 8.20 "Медицинский вестник". 8.25 "На заметку". 8.30 Деньги. 8.45 Графоман. 8.55 Православный календарь. 9.00 "Городок". 9.30 "Собачий мир". Телесериал. 10.05 20.45 "Санта-Барбара". 11.30 22.20 "Графиня де Монсоро". 12.30 Моя семья. 13.30 Футбол без границ. 14.30 "Ночи полнолуния". 16.20 0.10 "Мой Пушкин". 16.30 "Маленький бродяга". 17.30 Кроссворд. 18.05 История одного события. 20.30 Подробности. 21.50 Сам себе режиссер. 0.15 Живая коллекция.

## ЧЕТВЕРГ

### 5 ФЕВРАЛЯ "ОРТ"

6.00 "Доброе утро". 9.00 12.00 15.00 18.00 0.40 Новости. 9.15 18.20 "Роковое наследство". 10.00 Человек и закон. 10.40 Пока все дома. 11.15 Домашняя библиотека. 11.25 Телеигра "Эти забавные животные". 12.15 "Вместе". 13.05 "Семнадцать мгновений весны". 3-я серия. 14.20 "Золотая лихорадка". 15.20 Мультсериал "Невероятные приключения Джонни Квеста". 15.45 Классная компания. 16.15 Лего-го! 16.40 "Новые приключения Робин Гуда". 17.10 "...До 16 и старше". 17.30 Вокруг света. 19.05 Час пик. 19.30 "Эти забавные животные". 20.00 "Чтобы помнили..." 20.45 Спокойной ночи, малыши! 21.00 Время. 21.40 "Любовь с привилегиями". 0.15 "Каскадеры. Мир трюков". 0.55 "ГЛАВНЫЙ ПОДОЗРЕВАЕМЫЙ".

### "РОССИЯ"

7.00 Мультфильм. 7.15 Проснись. 7.30 11.00 14.00 17.00 20.00 23.30 Вести. 8.00 23.55 "Дежурная часть". 8.20 "Стронг" представляет. 8.25 "На заметку". 8.30 Деньги. 8.45 Графоман. 8.55 Православный календарь. 9.00 Вовремя. 9.30 Сам себе режиссер. 10.05 20.45 "Санта-Барбара". 11.30 22.20 "Графиня де Монсоро". 12.30 Совершенно секретно. 13.30 "Очевидное - невероятное. Век XXI". 14.35 "Шляхтич Завальня". 16.15 0.10 "Мой Пушкин". 16.30 "Маленький бродяга". 17.30 "Любовь с первого взгляда". 18.05 История одного события. 20.30 Подробности. 21.50 "Да, господин министр". 0.15 Подиум Д'Арт. 0.40 Лучшие игры НБА.

## ПЯТНИЦА

### 6 ФЕВРАЛЯ "ОРТ"

6.00 "Доброе утро". 9.00 12.00 15.00 18.00 0.35 Новости. 9.15 18.20 "Роковое наследство". 10.05 Клуб путешественников. 10.55 Смак. 11.15 Домашняя библиотека. 11.25 "Играй, гармонь любимая!". 12.15 Программа "Вместе". 13.05 "Семнадцать мгновений весны". 4-я серия. 14.30 "Каскадеры. Мир трюков". 15.20 "ПОВЕЛИТЕЛЬ СЛОНОВ". 16.55 Улица Сезам. 17.25 "50х50". 19.10 Здоровье. 19.45 Поле чудес. 20.45 Спокойной ночи, малыши! 21.00 Время. 21.40 Коломбо в детективе "НАПЕРЕГОНКИ СО СМЕРТЬЮ". 23.50 Взгляд. 0.35 "САВОЙ".

### "РОССИЯ"

7.00 Мультфильм. 7.15 Проснись. 7.30 11.00 14.00 17.00 20.00 23.30 Вести. 8.00 23.55 "Дежурная часть". 8.20 "Мир здоровья". 8.25 "На заметку". 8.30 Деньги. 8.45 Графоман. 8.55 Православный календарь. 9.00 "Красная книга". 9.30 "Да, господин министр". 10.05 20.45 "Санта-Барбара". 11.30 22.20 "Графиня де Монсоро". 12.30 Старая квартира. 13.30 "У всех на устах". 14.35 "КРОКОДИЛЫ". 16.30 "Маленький бродяга". 17.30 Кроссворд. 18.05 История одного события. 20.30 Подробности. 21.45 Маски-шоу. 0.15 "XX век: Майя Плисецкая и Пьер Карден? Мода и танец".

## СУББОТА

### 7 ФЕВРАЛЯ "ОРТ"

8.00 "ПО УЛИЦАМ КОМОД ВОДИЛИ". 9.10 Мультфильмы. 9.40 Лотто-Миллион. 9.45. Слово пастыря. Митрополит Кирилл. 10.00 15.00 18.00 Новости. 10.10 Домашняя библиотека. 10.30 Музыкальная почта. 11.10 "Каламбур". 11.45 Смак. 12.05 Возвращение Третьяковки. История одного шедевра. 12.30 "Ералаш". 12.55. "Америка с М.Таратутой" 13.55. Комедия "БАЛАМУТ" 15.20 "Цивилизация". 15.50 Мультфильм. 16.35 В мире животных. 17.15 "Как это было". 18.10 "Чердачок Фруттис". 18.50 "Спрут-3". 20.10 Джентльмен-шоу. 20.45 Спокойной ночи, малыши! 21.00 Время. 21.55 "Смертельное оружие". 23.55 Репортаж об открытии XVIII зимних Олимпийских игр. 0.50 "ПОДПОЛЬЕ".

### "РОССИЯ"

7.00 Утренний экспресс. 7.50 Утро крестьянина. 8.20 Поле зрения. 8.45 "На дорогах России". 9.00 Мультфильм. 9.15 "Позвоните Кузе!". 9.45 "Мак и Матли". Телесериал. 10.10 Доброе утро, Страна! 11.30 "У всех на устах". 12.00 Репортаж об открытии XVIII зимних Олимпийских игр. 14.00 20.00 Вести. 14.30 "Люди и деньги". 15.00 Федерация. 16.00 "Закон и порядок". 17.00 Русский бой. 18.55 Моя семья. 20.40 Олимпийский курьер. 21.15 "КОРОЛЬ МОШЕННИКОВ". 23.15 "Аншлаг" и Ко. 0.15 "МАРТА".

## ВОСКРЕСЕНЬЕ

### 8 ФЕВРАЛЯ "ОРТ"

7.50 "ЧЕЛОВЕК С ДРУГОЙ СТОРОНЫ" 9.25 16.05 16.30 "Дисней-клуб". 9.55 Спортлото. 10.00 15.00 0.10 Новости. 10.10 "Непутевые заметки" Дм.Крылова. 10.30 Пока все дома. 11.10 Утренняя звезда. 12.00 17.45 XVIII зимние Олимпийские игры. 13.15 "Подводная одиссея команды Кусто". 14.10 Смехопанорама. 15.20 Клуб путешественников. 17.00 Колесо истории. 18.25 Жизнь замечательных людей. 19.00 "Дело было в Пенькове". 20.55 Киноафиша. 21.00 Время. 21.35 "БОЛЬШОЙ". 23.40 Дневник Олимпиады ". 0.15 "ЗАСАДА".

### "РОССИЯ"

7.00 Утренний экспресс. 7.50 "Служу Отечеству!". 8.20 Там - там. 9.15 "Позвоните Кузе!". 9.45 "Мак и Матли". 10.10 Доброе утро, Страна! 11.00 "Мир книг с Леонидом Куравлевым". 11.15 Русское лото. 11.55 22.35 "Мой Пушкин". 12.00 "Очевидное - невероятное. Век XXI". 12.30 23.20 На зимних Олимпийских играх. 14.00 Вести. 14.30 Пульс. 15.00 Парламентский час. 16.00 "Закон и порядок". 17.00 Диалоги о животных. 18.00 Мультфильмы. 18.45 Старая квартира. 20.00 Зеркало. 21.05 Олимпийский курьер. 21.40 "Урмас Отт с В.Спиваковым". 22.40 Сиреневый туман. 0.50 "К-2" представляет.




## Ерепъелне... Уксăмлă урлă

Хисеплĕ редакци! Сирĕн пата çырса яриччен малтан тивĕçлĕ инстанцисенче пултăмăр, анчах та эпир çӳренин усси пулас çуккине ăнлансан хăть хаçата çырса ярар-ха, терĕмĕр. Декабрĕн 24-мĕшĕнче, юнкун, эпир, Ерепъел ялĕнчи тăватă пассажир, автовокзал кассинчен Нăрлат-Тĕкĕрмел маршрутри 15 сехетри автобус çине билет илтĕмĕр. Анчах та шофер пире лартасшăн пулмарĕ. "Ахаль те çын нумай",- терĕ. Билетсем алăра пулнипе эпир пурпĕрех автобус çине лартăмăр. Ерепъел ялне çитсен шофера пире антарса хăварма ыйтрăмăр, анчах та вăл çилĕпе çапла каласа хучĕ: "Каларăм вĕт сире ан ларăр тесе - чарăнмастăп".

Çапла, вăрçа-вăрçа эпир Уксăмлă ялне çитрĕмĕр. Кунта пĕр пассажиркăн анмалла пулнипе вăл чарăнчĕ, унпа пĕрле эпир те анса юлтăмăр. Акă çапла Уксăмлă урлă çуран Ерепъел ялне çитме тиврĕ. Эпир юлташпа çамрăк, аптрамарăмăр. Район больницине пынă карчăкпа старике шел пулчĕ, ыратакан урисемпе вĕсем çак 3 çухрăма аран-аран утса тухрĕç. Вĕсен вырăнĕнче водитель пулнă пулсан вара, вăл хăй те çамрăк мар вĕт-ха...

Мĕншĕн-ха çынсем çавăн пек усал, пĕр-пĕрне шеллемеççĕ?

**Пассажирсен ятĕнчен ИСАЕВА.**

*Хăна юррисем*

## Ай-хай, тухас килет аслă хире

**Ай-хай, тухас килет аслă хире,**
**Курас килет ыраш уçăмне.**
**Çак çурта, тăвансем,**
**килес килет,**
**Мĕнле пурăннине пĕлес килет.**

**Ешĕл курăк епле ешерет-ши,**
**Çава тăпси епле тӳсет-ши?**
**Эпир килетпĕр, хăвăр пымастăр,**
**Сирĕн чĕрĕр епле тӳсет-ши?**

**Кĕçĕн алăкăр уçă пулмасан,**
**Кам курăччĕ сăрлă çунăра?**
**Эсир пирĕн тăван, ай, пулмасан,**
**Кам юрлăччĕ сирĕн умăрта?**

**Уххине те ятăм ай çӳлелле,**
**Ухă тимри анчĕ çĕрелле.**
**Ухă тимри асăма, ай,килмерĕ,**
**Çак тăванăм асăмран каймарĕ.**

**Чупрăм кăна антăм шыв хĕрне,**
**Пăхăр куркапала шыв ĕçрĕм.**
**Пăхăр куркапала ăш канни çук,**
**Эп сиртен, тăванăм, тăранни çук.**

**Кĕрекĕрсем тулли апат-çимĕç,**
**Эпир тухса кайсан пуш юлĕ.**
**Пуш та юлмĕ, тăван, мĕн те юлмĕ,**
**Ик кĕрекĕр тулли чыс юлĕ.**

**Пухса йĕркелекенĕ Е.Илюшкина.**

## Пĕринчен тепри илемлĕ! Хăшне суйласа илес-ши?



*Андриян ГРИГОРЬЕВ*

## *ЮРАТСА ПУРĂНАР!*

Çитĕп терĕм, çитеймерĕм,
тупаймарăм эп сана.
Илтĕп терĕм, илтеймерĕм
санăн уçă сассăна.
Кĕрĕп терĕм, кĕреймерĕм,
уçаймарăм алăкна.
Курăп терĕм, кураймарăм,
савнă тусăм, эп сана.
Чĕнĕп терĕм, чĕнеймерĕм,
чĕнеймерĕм улаха.
Калăп терĕм, калаймарăм сана
хамăн сăмаха.

Харкашу шырама,
Кӳренӳ пуçтарма,
Кирлĕ мар ку вара, кирлĕ мар.
Пĕр-пĕрне ăнланса,
Пĕр-пĕрне пулăшса,
Сыхласа пĕр-пĕрне пурăнар!

Тăван пӳрт çуттине,
Чăвашсен чĕлхине
Манас марччĕ вара, манас мар.
Ăнланса, пулăшса,
Каçарса, юратса
Пурăнар, ентешсем, пурăнар!

## Пĕлтерӳсем

"Наркодел" - эрех ĕçме пăрахтарма апат çине хушса памалли эмел. Эрех ĕçекене пĕлтермесĕр те пама пулать. Районти культура çуртне февралĕн 2, 16-мĕшĕсенче 11 сехетрен пуçласа 12 сехетчен пыма пултаратăр. Телефон: 2-16-55. "Наркодела" кашни кунах туянма пулать. Мускаври ДФ 1995 çулхи сентябрĕн 28-мĕшĕнче панă 000102 номерлĕ лицензи.

* * *

1,5 çулхи овчарка сĕнетпĕр. Телефон: 5-23-87.

* * *

10 соткăллă уйрăм çурта (газ пур) икĕ е виçĕ пӳлĕмлĕ хваттерпе улăштаратпăр. Адрес: Ватутин урамĕ, 15. 2-19-00 номерлĕ телефонпа 16 сехетчен шăнкăравламалла.

* * *

Шалти ĕçсене туса пĕтермен коттедж сутăнать. Хакне йӳнетнĕ. Адрес: Московская урамĕ, 5-36.

* * *

Пĕр е икĕ пӳлĕмлĕ хваттере, е газпа ăшăтакан уйрăм çурта тара илетĕп. Телефон: 5-16-03.

* * *

Мамăк ялĕнче хуралтăсемлĕ виçĕ пӳлĕмлĕ çурт сутăнать. Телефон: 4-12-53, Демидова ыйтмалла.

* * *

Нăрлат хулинчи пĕр пӳлĕмлĕ приватизациленĕ хваттере (1-мĕш хут, кантăкланă балкон, пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 33,4 тăваткал метр) Ульяновск хулинчи хваттерпе улăштаратăп е сутатăп. Адрес: Нăрлат хули, Горький урамĕ, 10 е Ульяновск хули, Ефремов урамĕ, 27-51.

* * *

Çемье хваттер тара илет. Телефон: 34-2-84.


"Татнефть" АО привилегиллĕ акцийĕсене туянатпăр

Нăрлат хули, Советская урамĕнчи 94-мĕш çурт (малтанхи "Родина" кинотеатр), 9 сехетрен пуçласа 17 сехетчен пымалла.

Телефон: 2-18-61.


**(Малалли. Пуçламăшĕ 11-мĕш номерте).**

## Ăçта йăнăшрăм-ши?

*КАЛАВ*

Унăн мăшăрĕ Елена Петровна, хăмăр куçлă, çавракa хĕвел питлĕ, йăрăс пӳллĕ, ватăлма пуçланине пытарма тăрăшакан, лара-тăра пĕлмен, чаплă çи пуçлă, ылтăн-кĕмĕл чăмăркки.

- Тытăр-ха черккĕрсене. Ярăнтарар тепре, - хавассăн курăнасшăн пулчĕ Хĕветĕр. Вара хăй ура çине тăрсах тĕппипе ĕçрĕ, хăнасене те çапла тума сĕнчĕ.

Черккесем пĕр-пĕрне перĕнсе чанклатрĕç, ĕçрĕç, хыпаланмасăр сĕтел çинчи техĕмлĕ апат-çимĕçе тутанчĕç, анчах темшĕн калаçу хĕрмерĕ. Е пĕр-пĕринчен вăтанчĕç, е Хĕветĕрĕн чĕмсĕр кавлекен хуняшшĕнчен шикленчĕç, е залри хаклă япаласем иментерчĕç.

Хăнасем шăпланни Хĕветĕре килĕшмерĕ.

- Эх, тăвансем, мĕнле вăхăтра пурăнатпăр, - калаçăва чĕртес терĕ вăл. - Мĕн кăна пулса иртмест çĕршывра. Унта та кунта вăрçă вăрçаççĕ, айăпсăр çынсен пурнăçне татаççĕ. Магазинсем те, урамсем те ют çĕршывран илсе килнĕ таварсемпе тулса ларчĕç. Хакĕсем вара ĕрĕхсех кайрĕç. Ĕççынисем вĕсене куçпа çеç кураççĕ, туянмашкăн нухрачĕ çук. Çынсем хушшинче курайманлăх, хисеплеменни, ура хурса такăнтарасси, пĕрне-пĕри путарасси, такам шучĕпе пурăнасси алхасать. Ĕçкĕпе иртĕхеççĕ, вăрлаççĕ, вĕлереççĕ. Ах, анчах! Хăраса ӳкер мар-ха. Расçей темле пăтăрмаха та тӳснĕ, çĕнтернĕ, уралланнă. Хăрасах ӳкер мар-ха. Йĕркеленĕ-ха пурнăç! Турă пулăшсан пур нушаран та хăтăлăпăр.

Хĕветĕр сăмах-юмах çаптарса черккисене тултарать, ĕçме сĕнет.

-Ан вăтанăр, килти пек пулăр, пирĕн пурте пур, картиш тулли выльăх-чĕрлĕх, нӳхреп тулли ĕçме-çиме, - тет, çав вăхăтрах хуларан килнисене: "Эсир кăлпассие куçпа çеç куратăр", - тесе тĕртсе те илет.

- Тирпейлĕ пул, ывăлăм. Эсир те кăлпасси çеç çиместĕр пуль, - пӳлет ашшĕ ывăлне.

- Мĕнле калас, унсăрăнах тăмастпăр, ĕçме-çимешĕн кӳрше каймастпăр. Пирĕн сĕтел пуян та тулăх.

- Ан мухтан, Хĕветĕр. Ан хуçкалан. Тӳррине кала-ха. Кинĕмĕр, Анна, склад заведующийĕнче ĕçлемесен, çак çурт-йĕре çавăрайнă пулăттăрччĕ-ши? Пирĕн умра ан каçăркалан.

- Эй, эсĕ, тĕрĕслĕхе юратакanskер, каллех хăвăн юррăна юрлатăн. Пĕтрĕ, путланчĕ сирĕн какăриччен çитерекен социализмăр. Халь демократи. Кам мĕнле пурăнас тет - чару çук. Никам та эс мĕн çиетĕн тесе сан чашку-тиркӳне тĕрĕслемест. Пурăнма пĕлетĕн - пурăн тет, - Хĕветĕр ашшĕ çине çилленсе, çисе ярасла пăхрĕ. Усал хĕлхемсем куçĕнче ялкăшрĕç. - Мĕнле ырлăх куртăн-ха пурнăçăнта, атте? Ир пуçласа каçчен ĕçлерĕн, патшалăхăнне пĕр пусне кĕсйӳне чикмерĕн, пире те ĕçлеме вĕрентесшĕн çунтăн, тĕрĕслĕхе пурнăç çулĕ тума ăс патăн. Çийӳнтен кив тумтир каймарĕ, улмапа та çăкăрпа çеç çырлахрăн. Паллах, выçă ларман. Пуянтарах пурăнакансене те ăмсанатăн.

**Н.ПАЙМУРАТОВ.**
**(Малалли пулать).**


"Нефтеавтоматика" вĕрентӳ центрĕ (Лениногорск хули) февралĕн 3-мĕшĕнчен курс irttерет:

1. Промышленность предприятийĕсенчи энергохуçалăхшăн явaплăскер.
2. Квалификаци ушкăнĕ валли (II-V) электричествăпа техника персоналĕ.
3. УЗК дефектоскописчĕ.
4. Рентгенпа гаммаграфировани дефектоскописчĕ.
5. Çыхăну кабельщикĕ.
6. Çыхăну электромонтерĕ.
7. Котельнăй операторĕ.
8. ДВС топливо аппаратурин слесарĕ.
9. Мостовой тата козловой крансен машинисчĕ.
10. Пĕрĕнчĕк тата шĕвĕ газ баллонĕсемпе усă курас, вĕсене упрас, турттарас енĕпе ĕçлекен персонал.
11. Алăпа шăратса çыпăçтаракан электросварщик.
12. Пăс тата вĕри шыв пăрăхĕсене тивĕçтерекенсем.

Телефонсем: 2-34-45, 2-05-18.



Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нăрлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нăрлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 856.